25-мĕш çул тухать: Хакĕ 20 пус.

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1943
ФЕВРАЛЬ
3
ЮНКУН
26(6263) №

Чăваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

ВĂРЛĂХСЕМ ПАХАЛĂХЛĂ ПУЛЧЧĂР

Çуракине хатĕрленес ĕçре вăрлăх тĕп вырăн йышăнса тăрать. Паха вăрлăх тырпулсен тухăçлăхне татса парать. Кашни колхоз руководителĕн çакна яланах асра тытса тăмалла.

Пирĕн республикăри колхозсем, пĕтĕмĕшпе илсен, кăçалхи çуракинче акмалли вăрлăхсен фондне хывса çитерчĕ. Анчах çакă вăл 1943 çулхи çуракинче акма кирлĕ вăрлăхсем республикăри пур районсемпе колхозсен те çителĕклĕ таран пуррине пĕлтермест-ха. Пачах урăхла, хăшпĕр районсенчи руководительсем, колхозсен председателĕсем ку тарана çитсе те вăрлăх хатĕрлес ыйтупа тивĕçлĕн интересленмеççĕ, малта пыракан районсенчи колхозсен ĕç опытне илмеççĕ.

Вăрлăх хатĕрлес ĕç Шăмăршă, Чкаловски, Кувакино районĕсенче уйрăмах япăх пулса пырать. Шăмăршă районĕнче çурхи тулă вăрлăхĕ 14 колхозра, сĕлĕ вăрлăхĕ 25 колхозра, вир вăрлăхĕ 25 колхозра, хуратул вăрлăхĕ 17 колхозра, пăрça вăрлăхĕ 21 колхозра çитмест. Çавăн пекех ытти хăшпĕр районсенче те вăрлăх хатĕрлес тĕлĕшпе пачах та çителĕксĕр ĕçлекен колхозсем нумай. Район, малта пыракан колхозсен паха ĕçне пула вăрлăх фондне хывса çитерчĕ пулсан та, чылай колхозсенче пур культурăсен вăрлăхĕсем те кирлĕ чухлĕ çук е пачах та çук. Çакăн пек çитменлĕхе халех пĕтермелле. Паянхи кун умра тăракан пĕрремĕш задача вăл — кашни колхозра пур тырăсен вăрлăхĕсене те халех кирлĕ таран уйăрса çитересси пулса тăрать. Çак ĕçе организацилесе пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе колхозсемпе ялсовет исполкомĕсен председателĕсен халăх умĕнчи ответлăха туйса ĕçлемелле.

Çураки вăхăчĕ хăйне май часах çывхарса килет. Уйăрса хунă вăрлăха сортласа акма юрăхлă тумалла, вĕсен пÿрлĕхне тата шăтас пахалăхне тĕрĕслесе кирлĕ мерăсене йышăнмалла. Уйăрса хунă пĕтĕм вăрлăха акмалли кондицие лартмалла.

Республикăри колхозсем вăрлăхсене триерсемпе сортлас ĕçе кăçал иртнĕ çулхинчен хăвăртрах туса пыраççĕ. Январĕн 20-мĕшне илнĕ сведенисем тăрăх халĕ пурĕ вăрлăхсен 52,5 процентне сортланă. Вăрнар районĕнчи колхозсем, иртнĕ çулсенчи пекех, кăçал та вăрлăхсене сортлас ĕçе пысăк тимлĕхпе туса пыраççĕ. Мамалайкассинчи Ворошилов ячĕпе тăракан тата Кольцовкăри Сталин ячĕпе тăракан колхозсем çуркунне акмалли тырпулсен мĕнпур вăрлăхне сортланă, акмалли кондицие лартнă. Пур тырăсен вăрлăхĕ те ку колхозсенче паха кондициллĕ. Вăрлăхсене тĕпчекен районри лаборатори январĕн 15-мĕшĕ тĕлне 11.455 центнер вăрлăхăн тасалăхне тата нÿрлĕхĕпе шăтас пахалăхне тĕрĕсленĕ. Тĕрĕслÿ результачĕ çакна кăтартса парать: Вăрнар районĕнчи колхозсем 1943 çулта вăйлă тырпул туса илме вăрлăхсене лайăх хатĕрленĕ. Тĕслĕхрен, вăрлăхлăх уйăрнă çурхи тулăн тата сĕлĕн шăтас пахалăхĕ 91—99 процента çитет, тасалăх енĕпе те вĕсем питĕ паха.

Вăрлăхсене триерсемпе сортлас ĕçе Комсомольски, Калинински, Çĕрпÿ, Шăхасан, Çĕмĕрле районĕсенчи колхозсем те чылай пысăк хăвăртлăхпа туса пыраççĕ. Сортланă вăрлăхсене колхозсем çийĕнчех лабораторисенче тĕрĕслеттереççĕ. Вăрлăхăн пахалăхне ÿстерессишĕн тăрăшаççĕ. Елчĕк районĕнчи нумайĕш колхозсем çуракинче акмалли вăрлăхсене тĕрĕслеттернĕ. Вăрлăха тĕрĕслекен районри лаборатори декабрьпе январь уйăхĕсенче пурĕ 23.324 центнер вăрлăха тĕрĕсленĕ. Лаборатори заведующийĕ Барышева юлташ колхозниксене вăрлăхсен пахалăхне лайăхлатас тĕлĕшпе тумалли ĕçсене тĕплĕн ăнлантарса парать, тĕрĕслеме панă тырра хăвăрт тĕрĕслесе тухать. Районри 46 колхоз вăрлăхсене лабораторире тĕрĕслеттернĕ. Тĕрĕслÿ результачĕсем вăрлăхсен пахалăхĕ кăçал пысăк пулнине кăтартаççĕ. Елчĕк районĕнчи колхозсенче сĕлĕпе çурхи тулăн шăтас пахалăхĕ 90—97 процента çитет.

1943 çулта пысăк тухăçлă тырпул туса илес задачăна ăнăçлăн пурнăçлас пулсан, пирĕн тунă ĕçсемпе пĕр минутлăха та лăпланса лармалла мар. Çуракине хатĕрленес ĕçсене хăвăртрах тата тĕплĕн туса çитерессишĕн, кашни килограмм вăрлăха акма хатĕрлессишĕн социализмлă ăмăрту вăйлансах пымалла. Вăрлăхсене сортлас ĕçе пирĕн республика татах та хăвăртрах туса пыма пултарать. Çак ĕçри çитменлĕхсемпе чăрмавсене халех пĕтермелле. Районсенчи çĕрĕç пайĕсен, колхоз председателĕсен çак ĕçе колхозниксене пурне те мобилизацилемелле.

Вăрлăх хатĕрленĕ чухне кăçал пирĕн иртнĕ çулхи йăнăшсене те шута илмелле. Вăрлăх фондне уйăрса хуни вăл çур ĕç кăна-ха. Вăрлăха тасатмалла, акмалли кондицие çитермелле—ку вăл ĕçĕн тепĕр пайĕ.

Шупашкар районĕнче çакна шута илсе ĕçлемеççĕ-ха. Лабораторире тĕрĕсленĕ 13.024 центнер вăрлăхран кунта 8.560 центнер тырă таса мар пулнипе, 959 центнер—нÿрĕ пулнипе акма юрăхлă мар. Çакăнтан ĕнтĕ курăнать районри хăшпĕр колхозсем тырра сортлас ĕçе кирлĕ пек туса пыманни. Акă тата Хĕрлĕ Чутай районĕнчи колхозсен ĕçне илсе пăхар. Районри лаборатори халь мĕн пурĕ те 7.973 центнер вăрлăха çеç тĕрĕслесе тухнă-ха. Вăрлăхсен пахалăхне хальтерех тĕрĕслени уйрăмах кирлĕ. Мĕншĕн тесен, колхозсем вăрлăх фондне уйăрса хунă, анчах сортласа тивĕçлĕ кондицие лартас тĕлĕшпе начар ĕçлеççĕ.

Пирĕн колхозниксем, колхозницăсем вăрçă условийĕнче те паха çитĕнÿсем туса ĕçлеме вĕренчĕç. Колхозлă ялхуçалăхĕ нимĕнле йывăрлăхпа чăрмав умĕнче те чарăнса тăмарĕ. Фронтпа тăван çĕршыв ыйтнине тивĕçтерессишĕн вуншар пин колхозниксемпе колхозницăсем ырми-канми ĕçлеççĕ.

1943 çулхи çуракине фронтпа çĕршыв валли татах та нумайрах тырпул туса парас лозунгпа иртермелле. Халĕ республикăри нумай колхозсем Хĕрлĕ Çар 25 çул тултарнă куна çуракине хатĕрленсе çитнипе паллă тăвассишĕн социализмлă ăмăртăва тухрĕç. Çуракине хатĕрленес ĕçсене вĕсем анлăн туса пыраççĕ.

Çĕрĕç органĕсенче ĕçлекен работниксен, партипе совет организацийĕсен çуракине хатĕрленес ĕçре колхозсене ĕçлĕн ертсе пымалла. Вăрлăх хатĕрлес ыйтăва чи малти вырăна хумалла, лайăх ĕçлесе çемçетнĕ çĕре паха вăрлăхсем акса хăвармалла.

Вăрлăх фондне—паха тырă

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. (Хамăр корр.). «Красное Сормово» колхоз çуракине аван хатĕрленет. Колхоз вăрлăхсене сортласа пĕтернĕ. Вăрлăхсен пахалăхне тĕрĕсленĕ. Сĕлĕ вăрлăхĕ 95 процент, тулă 99 процент, пăрçа 99 процент, ясмăк, 96 процент шăтаççĕ. Колхоз нумай колхозсене вăрлăх улăштарса пама пултарать.

Колхоз тимĕрçи А. Филиппов юлташ, «Янмурзино» колхоз тимĕрçи Лаврентий Гордеев юлташăн çырăвне вуласа тухнă хыççăн, хăйĕн ĕçне лайăхлатрĕ. Колхозăн 48 плуг юсамалла. Халĕ вăл 42 плуг юсанă. Ытти машинăсене те юсаса пĕтернĕ хыççăн вăл кÿршĕри колхозсен ялхуçалăх машинисене юсама тытăнать.

Колхозниксем Çĕрпÿ районĕнчи «Чуваш ЦИК» колхоз членĕсен чĕнĕвне пысăк кăмăлпа сÿтсе-явнă. Çакăн хыççăн Н. Зайцев, Е. Петров, Н. Пудов колхозниксем сÿсрен пăявсем явса хатĕрлерĕç, транспорт инвентарĕсене ремонтларĕç. Колхоз çураки валли тата çĕнĕрен 10 комплект хăмăт-ĕнерчĕксем хатĕрленĕ, 50 стан çĕнĕрен урапа туяннă.

Çуракине хатĕрленес тĕлĕшпе колхозри пĕрремĕш бригадăри (бригадирĕ М. Иванов) колхозниксем лайăх ĕçлеççĕ. Бригадăри колхозниксем пĕтĕм акăнакан çĕр лаптăкĕ çинче юр тытса хăварнă, 270 лав тислĕк кăларнă.

Çуракине колхозăн лашисем мăнтăр тухаççĕ, лашасем валли апат çителĕклĕ.

С. Шадин.

Греци посланникĕ А. Политис господин Совет Союзне килни

Январĕн 31-мĕшĕнче Куйбышев хулине Грецин Совет Союзĕнчи Чрезвычайнăй Посланникĕ тата Полномочнăй Министрĕ Атанас Политис господин килнĕ. Аэродром çинче А. Политис господина Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссариачĕн Протокольнăй Отделĕн Заведующийĕ Ф. Ф. Молочков юлташ кĕтсе илнĕ.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Февралĕн 1-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерÿ

Пирĕн войскăсем вирлĕн атакăланă хыççăн Сватово хулипе пысăк чугунçул станцине тытса илнĕ.

Воронеж фронтĕнчи войскăсем Советский, Ястребовка ятлă район центрĕсене тата Кшень ятлă чугунçул станцине тытса илнĕ.

Кăнтăр фронтĕнчи войскăсем Мечетинская ятлă район центрне, Зерновой ятлă халăх пурăнакан пысăк пункта тата Верблюд ятлă чугунçул станцине тытса илнĕ.

Çурçĕр Кавказ фронтĕнчи войскăсем Выселки ятлă район центрне, Фастовецкая ятлă пысăк станцăна тата халăх пурăнакан ытти пунктсене тытса илнĕ.

Кавказ лешъенчи фронтра пирĕн войскăсем Усть-Лабинская ятлă район центрĕпе чугунçул станцине тытса илнĕ.

Баренц тинĕсĕнче пирĕн карапсем тăшманăн 8.000 тонна водоизмещениллĕ транспортне путарнă.

* * *

Январĕн 31-мĕшĕнче пирĕн авиаци чаçĕсем фронтăн тĕрлĕ участокĕсенче нимĕçсен 10 танкне тата войскăсемпе грузсем турттарса пыракан 70 автомашинине ытла пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ, артиллерин 5 батарейине пусарса лартнă, пĕр поезда çĕмĕрнĕ, боеприпассен складне сирпĕнтерсе янă, тăшманăн пехотине пĕр батальона çити сапаласа янă, пĕр пайне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Дон фронтĕнчи войскăсем Сталинградран çурçĕртерехре хирĕç тăракан гитлеровецсене пĕтерсе пынă. Пирĕн чаçсем кун каçа нимĕçсен 1.500 ытла салтакĕпе офицерне пĕтерсе тăкнă. Тыткăна лекнисен хисепĕ сехетсеренех ÿсет, вăл вилнисен хисепĕнчен темиçе хут пысăкрах. Çавăн пекех тата трофейăсем нумай тытса илнĕ, вĕсене халь шута илеççĕ.

* * *

Кăнтăр фронтĕнчи войскăсем, тăшман хирĕç тăнине çĕнтерсе, малалла тапăнса пынă. Нимĕçсем 2 батальон таран пехотине тата танкĕсемпе бронемашинисене Н-ски чаçăн позицийĕсене хирĕç контратакăна янă. Пирĕн артиллеристсемпе бронебойщиксем 2 танка тата 7 бронемашинăна персе çĕмĕрнĕ, нумай гитлеровеца вĕлернĕ. Тăшмана хăваласа пырса, пирĕн боецсем халăх пурăнакан пысăк пункта тытса илнĕ.

* * *

Кăнтăр-Хĕвеланăç фронтĕнчи войскăсем, наступлениллĕ çапăçусем туса пырса, халăх пурăнакан темиçе пункта тытса илнĕ. Н-ски часть вăйлăн çапăçнă хыççăн тăшман оборонин узелне тытса илнĕ. Нимĕçсен 400 салтакĕпе офицерне çити пĕтерсе тăкнă. 7 оруди, 16 пулемет, 2 миномет, 6 противотанковăй пăшал тата артиллери складне тытса илнĕ. Тепĕр участокра пирĕн боецсем тăшманăн атакине сирсе янă, нимĕçсен 3 танкне çунтарса янă.

* * *

Воронежран хĕвеланăçнерехре пирĕн войскăсем ăнăçлăн наступлени туса пырса малалла кайнă та халăх пурăнакан темиçе пункта тытса илнĕ. Н-ски часть нимĕç полкне çавăрса илсе, пĕтĕмпе тенĕ пекех пĕтерсе тăкнă. 600 çынна тыткăна илнĕ тата 150 автомашинăпа 15 оруди тытса илнĕ.

* * *

Çурçĕр Кавказ фронтĕнчи войскăсем наступлениллĕ çапăçусем туса пынă. Тăшман тĕреклетнĕ пĕр рубежра совет подразделенийĕсене малалла кайма чарма хăтланнă. Артиллерипе минометсенчен вăйлăн персе, пирĕннисем нимĕçсем хирĕç тăнине çĕнтернĕ. 3 танк тата 40 автомашина пĕтерсе тăкнă. Тепĕр участокра Н-ски чаçăн боецĕсем нимĕçсен икĕ ротине çити аркатса тăкнă, 2 бронемашинине, хăй тĕллĕн çÿрекен 3 орудине пĕтерсе тăкнă, халăх пурăнакан 2 пункта йышăнса илнĕ. Трофейăсем тытса илнĕ тата тыткăна илнĕ.

* * *

Кавказ лешъенчи фронтăн войскисем çапăçса пырса малалла кайнă, халăх пурăнакан темиçе пункта йышăнса илнĕ. Н-ски чаçăн боецĕсем икĕ кун хушшинчи çапăçусенче нимĕçсенчен 12 танк, 5 танкетка, 40 оруди, 200 автомашина ытла, 100 километр тăршшĕ телефон кабельне тата боеприпассен 5 складне тытса илнĕ. Тыткăна илнисем пур.

* * *

Орел облаçĕнче кĕрешекен партизансен «Смерть немецким оккупантам» ятлă отрячĕ халăх пурăнакан пунктра нимĕç гарнизонне аркатса тăкнă. Партизансен ушкăнĕсем систермесĕр ял патне пынă та хурала пĕр сас-чĕвĕсĕр вĕлернĕ. Часовойсене вĕлерсен, совет патриочĕсем нимĕçсем тăракан çуртсене кĕрсе кайнă та темиçе вуншар салтакпа офицера пĕтерсе тăкнă. Ворошилов ячĕпе тăракан отрядри партизансем шоссе çулĕсем çинче 46 нимĕçе вĕлернĕ. Пĕр миномет, темиçе ещĕк мина, винтовкăсем тата патронсем тытса илнĕ.

* * *

Аяларахра Воронеж облаçĕнчи Корицкое ялĕнче нимĕçсен фашистла ирсĕрĕсем çаратни тата пусмăрлани çинчен çырнă акта пичетлетпĕр: «Нимĕçсем хăйсем хуçаланнă 6 уйăх хушшинче колхоза пĕтĕмпех çаратса пĕтерчĕç, мĕнпур колхозниксене нимĕн хăвармиччен çаратса тухрĕç. Туллимар даннăйсем тăрăх, фашистла çаратусăсем 150 лаша, 75 ĕне, 200 сысна, 100 сурăх ытла, килти кайăк-кĕшĕк нумай тата колхозниксен тĕрлĕ пурлăхĕсене илсе кайнă. Нимĕçсем хресченсене кунĕн-çĕрĕн ĕçлеттеретчĕç, вĕсене пысăк тÿлевсем тÿлеттерсе вăйран яратчĕç. Кашни кун вĕсем çĕнĕ те çĕнĕ повинность шухăшласа кăларатчĕç. Нимĕçсен фашистла салтакĕсем тунă усал ĕçсене пурне те çак актра кăтартса тухма май çук. Колхозниксем нимĕç оккупацийĕн чи йывăр кунĕсенче те çав усал ĕçсем час пĕтсе ларассине шанса тăнă. Вĕсем Хĕрлĕ Çар килсе фашистла пусмăрлăхран хăтарассине пĕлнĕ. Эпир алла усса ларман, эпир нимĕçсене пĕтĕм вăйпа тата тĕрлĕ майсемпе сăтăр тăваттăмăр». Акта Корицкое ялĕнчи çак çынсем алă пуснă: Ф. Черненко, Ф. Мельник, М. Черненко тата ыттисем те.

Февралĕн 2-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерÿ

Февралĕн 2-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Кăнтăр-Хĕвеланăç, Кăнтăр, Çурçĕр Кавказ, Кавказ лешъенчи, Воронеж, Ленинград тата Волхов фрончĕсенчи войскăсем малтанхи еннелле наступлениллĕ çапăçусем туса пынă.

* * *

Дон фронтĕнчи войскăсем гитлеровецсен пĕр-пĕринчен уйăрăлса кайнă групписене, Сталинградран çурçĕртерехре хирĕç тăраканскерсене, пĕтерсе пынă. Тăшманăн опорнăй пункчĕсене артиллерирен пенĕ хыççăн Н-ски чаçăн боецĕсем тăшманăн темиçе дзочĕпе блиндажне йышăннă. Тыткăна илнисем пур.

* * *

Кăнтăр фронтĕнчи войскăсем наступлениллĕ çапăçусем туса пынă. Мечетинская районĕнче нимĕçсем пирĕн чаçсене малалла кайма чарас тесе вăйлăн хирĕç тăнă. Гитлеровецсем çав участокра хирĕç тăнине сирсе янă, халĕ вĕсем пирĕн войскăсем пыра-пыра çапнипе каялла чакаççĕ. Совет боецĕсем халăх пурăнакан тĕреклетнĕ темиçе пункта йышăнса илнĕ, 3 танк тата ытти трофейăсем те тытса илнĕ.

* * *

Кăнтăр-Хĕвеланăç фронтĕнчи войскăсем малалла тапăнса пынă. Пĕр участокра çапăçу хирĕнче тăшман салтакĕсемпе офицерĕсен 300 вилли ытла выртса юлнă. Н-ски чаçăн боецĕсем халăх пурăнакан пункта йышăннă та 13 пулемет, 5 миномет, апат-çимĕç складне тата боеприпассем нумай тытса илнĕ.

* * *

Воронежран хĕвеланăçнерехре пирĕн войскăсем ăнăçлăн наступлени туса пынă, халăх пурăнакан темиçе пункта тытса илнĕ. Н-ски часть нимĕç батальонне çавăрса илсе ăна пĕтĕмĕшпех тыткăна илнĕ. Пирĕн танкистсем, каялла чакакан тăшмана хăваласа пырса, 13 оруди, 21 автомашина пĕтерсе тăкнă, 129 нимĕç салтакĕпе офицерне тыткăна илнĕ. Тепĕр участокра 15 оруди 150 автомашина тата ытти тĕрлĕ çар пурлăхĕсем тытса илнĕ. Тăшманăн 450 салтакĕпе офицерне тыткăна илнĕ.

* * *

Çурçĕр Кавказ фронтĕнчи войскăсем ăнăçлăн малалла куçса пынă. Н-ски соединенин чаçĕсем нимĕçсен 38 танкне, 270 автомашинине, боеприпассем, апат-çимĕç, медикаментсем тата ытти тĕрлĕ çар пурлăхĕсем тиенĕ 196 вагонне тытса илнĕ. Тепĕр участокра пирĕн боецсем халăх пурăнакан пункта йышăннă чухне трофейăсем тытса илнĕ, трофейăсем хушшинче 3 танк, 13 автомашина, 4 вагон снаряд, 6 вагон авиабомба, апат-çимĕç тиенĕ эшелон тата 700 пуç майракаллă выльăх пур.

* * *

Могилев облаçĕнче кĕрешекен партизансен отрячĕ икĕ эрне хушшинче тăшманăн 14 çар эшелонне ÿпĕнтерсе янă. Крушенисем вăхăтĕнче нумай гитлеровец вилнĕ тата аманнă. Кунсăр пуçне, совет патриочĕсем 10 кĕпере сирпĕнтерсе янă, 42 автомашинăна çунтарса янă е персе çĕмĕрнĕ. Партизансем пĕр оруди, 144 винтовка, 120 снаряд, 10.000 патрон тата ытти тĕрлĕ çар пурлăхĕсем нумай тытса илнĕ.

* * *

Венгерецсен 9-мĕш пехотнăй дивизийĕнчи 17-мĕш полкран тыткăна лекнĕ салтак Митро Рудаш çапла каласа панă: «Январĕн 24-мĕшĕнче нимĕçсен 57-мĕш пехотнăй дивизийĕнчи 164-мĕш полкăн командирĕ Ленц подполковник хушнă тăрăх Кочетовка ялĕнче венгерецсен тыткăна парăнма хăтланнă 49 офицерне персе вĕлернĕ». Нимĕçсене Кочетовка ялĕнчен хăваласа кăларсан, Рудашăн заявленине тĕрĕсленĕ. Çав заявлени пĕтĕмпех тĕрĕсе тухнă. Венгерецсен гитлеровецсем персе вĕлернĕ офицерĕсен виллисене тупнă. Персе вĕлернĕ çынсен хушамачĕсемпе званийĕсене палăртаççĕ.

* * *

Аяларахра Воронеж облаçĕнчи Истобное ялĕнче нимĕçсен фашистла ирсĕрĕсем тискер ĕçсем туни çинчен çырнă акта пичетлетпĕр: «Нимĕçсен пусмăрлăхĕнче пурăнса, эпир нумай асап куртăмăр. Нимĕç вăрă-хурахĕсем пирĕн яла кĕрсен малтанхи кунах мирлĕ пурăнакан 18 çынна персе вĕлерчĕç. Ун хыççăн çынсене çаратма тытăнчĕç, оккупацин юлашки кунĕччченех çаратса çÿрерĕç. Нимĕçсем пиртен 260 ĕне, вак выльăх, килти мĕнпур кайăк-кĕшĕке, пĕтĕм тырра, хамăр япаласене, атă-пушмаксене тата тумтирсене илсе кайрĕç. Палачсем колхозника Тимофей Крепишина, унăн хĕрне тата ывăлĕн ывăлне персе вĕлерчĕç, вата амăшне Крепишинăна чĕрĕллех çунтарса ячĕç. Ялтан тухса каяс умĕн фашистла ирсĕрсем «Память Ленина» колхозăн выльăх картишне старик сем пе хĕрарăмсен пĕр ушкăнне пухрĕç те вĕсем çине гранатăсем ыватрĕç. Нумай колхозник вилчĕ. Гитлеровецсем пирĕн ялта мĕнпурĕ 56 çынна асаплантарса вĕлерчĕç тата 80 колхозницăна Германие каторгăлла ĕçе хăваласа кайрĕç». Акта Истобное ялĕнчи çынсем Н. Аксенов, А. Ватутин, С. Зубарев, П. Захарова тата М. Семенова алă пуснă.

Танксемпе самолетсем тума республикăра пурĕ 60.066.000 тенкĕ пухнă

Февралĕн 1-мĕшне Государство банкĕн республикăри отделенине самолетсемпе танксем тума 60.066.000 тенкĕ хывнă.

Уйрăмăн илсен, танксен «Колхозник Чувашии» колоннине тума 44.289.000 тенкĕ, боевой самолетсен «Комсомолец Чувашии» эскадрильине тума 7.697.000 тенкĕ, «Медработник Чувашии» ятлă танксем тума 335.000 тенкĕ, «Лесоруб Чувашии» ятлă танксем тума 371.000 тенкĕ, самолетсен «Промкооперация Чувашии» ятлă звенине тума 111.000 тенкĕ, танксен «Народный учитель» колоннине тума 157.000 тенкĕ тата Потребкоопераци ячĕпе тăракан танксен колоннине тума 116.000 тенкĕ пухнă.

Танксен «Колхозник Чувашии» колоннине тума укçа пухас тĕлĕшпе Пăрачкав районĕ пĕрремĕш вырăн йышăнать, вăл 3.171.000 тенкĕ пухнă. Ун хыççăн Улатăр районĕ — 3.147.000 тенкĕ пухнă, виççĕмĕш вырăнта Шупашкар районĕ — 2.589.000 тенкĕ пухнă.

Танксен «Тракторист Чувашии» колоннине тума укçа пухас ĕçре Ишлей МТС-ĕ малта пырать. Унта 221.000 тенкĕ пухнă. Ун хыççăн Тăвай МТС-ĕ — 187.000 тенкĕ пухнă. Çĕмĕрле, Шăхасан, Шупашкар МТС-ĕсем те ку ĕçе аван организациленĕ.

Боевой самолетсен «Комсомолец Чувашии» эскадрильине тума Чкаловски районри комсомолецсемпе çамрăксем 948.000 тенкĕ пухнă. Шупашкар хулинчи ĕççыннисем самолетсем тума 617.000 тенкĕ пухнă.

«Медработник Чувашии» ятлă танксем тума Шупашкар хулинчи медицина работникĕсем 105.000 тенкĕ, Улатăр хулинчи медицина учрежденийĕсем 39.000 тенкĕ, Куславкка районĕнчи медицина работникĕсем 37.000 тенкĕ тата Канаш хулинчи медицина работникĕсем 33.000 тенкĕ панă. Ку ĕçе Калинино, Шупашкар, Пăрачкав, Советски тата Тăвай районĕсенчен медицина работникĕсем хутшăнман-ха.

Халăхăн укçи-тенкипе Хĕрлĕ Çара хĕçпăшаллантарас тĕлĕшпе çĕршывра пыракан патриотизмлă хăватлă движение тата анлăрах сарса пырар!

Самолетсен эскадрильине тума 3 уйăхри ĕçукçине параççĕ

Вăрманхĕрри-Чурачăк ялсовет исполкомĕнче ĕçлекенсем Коновалова, Шиков, Зайцева юлташсем самолетсен «Комсомолец Чувашии» эскадрильине тума 3 уйăхри ĕçукçине пама пулчĕç. Ялсовет исполкомĕн технички çак ĕç валли 500 тенкĕ пачĕ.

(Комсомольское. «Октябрь ялавĕ»).

Хĕрлĕ Çар боецĕсем патне парнесем ытларах ярса парар!

ТĂВАЙ, февралĕн 2-мĕшĕ. (Телефонпа). Районри ĕççыннисем фронтовиксем патне ярса пама 567 килограмм аш-какай, 37 килограмм пыл, 94 пăт тулă çăнăхĕ, 370 çăмарта, 128 килограмм премĕк, 140 литр эрех, 230 килограмм кĕрпе, 185 килограмм çу, 64 килограмм табак пухрĕç.

«Красная Чувашия» колхоз членĕсем боецсем патне 150 килограмм тулă çăнăхĕ, 25 килограмм аш-какай, 5 килограмм пыл, 4 килограмм çу, 10 килограмм колбаса, 150 çăмарта ярса параççĕ. Çавăн пекех Ленин ячĕпе тăракан колхоз членĕсем те 30 килограмм какай, 9 пăт тулă çăнăхĕ, 150 çăмарта, 3 килограмм çу, 10 килограмм чăкăт, 5 литр эрех, 3 килограмм табак ярса параççĕ.

А. Салмин,
ВКП(б) райкомĕн секретарĕ.

* * *

ВĂРМАР, февралĕн 2-мĕшĕ. (Телефонпа). 400 килограмм аш-какай, 60 килограмм пыл, 120 пăта яхăн тулă çăнăхĕ, 9 пăт кĕрпе, 4 пăт ытла типĕтнĕ çĕрулми, 53 килограмм çу, 115 литр эрех, 67 килограмм табак, 180 пăт çĕрулми, 150 килограмм кипĕр ярса параççĕ районри ĕççыннисем юратнă фронтовиксем патне. Парнесем пухас ĕçе «Атнаш», «Хĕрлĕ Мăрат» тата «Красная горка» колхозсем уйрăмах лайăх организацилерĕç. «Хĕрлĕ Мăрат» колхоз членĕсем ярса паракан парнесен шутĕнче — 27 килограмм какай, 3 килограмм çу, 6 килограмм пыл, 9 пăт ытла тулă çăнăхĕ.

В. Пульхеровский,
ВКП(б) райкомĕн кадрсем енĕпе ĕçлекен секретарĕ.

* * *

СЕНТЕР, февралĕн 1-мĕшĕ. (Телефонпа). Хĕрлĕ Çар 25 çул тултарнă ятпа фронтри юлташсем патне парнесем ярса панă çĕре районри колхозсем пысăк активлăхпа хутшăнаççĕ. Январĕн 31-мĕшĕ тĕлне парнесем пухас тĕлĕшпе ĕçлекен районри комиссин складне 905 килограмм какай, 48 пăт тулă çăнăхĕ, 800 çăмарта, 58 килограмм пыл, 50 килограмм çу, 60 килограмм махорка тата ытти çимелли япаласем пухăннă. Кунсăр пуçне, ĕççыннисем хăйсен ячĕпе 67 уйрăм посылка ярса параççĕ.

Янăм ялсоветĕнчи «Быстрый» колхоз членĕсем боецсем патне 65 килограмм какай, Ильинкăри Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз 6 пăт тулă çăнăхĕ, Шупуç ялсоветĕнчи «Коммунар» колхоз 58 килограмм какай тата ытти те ярса параççĕ.

М. Исаев.

Генералсем тыткăна парăнаççĕ

(„Правда" хаçатăн çар корреспондентĕнчен)

Çил-тăман çĕрĕпех лăпланмарĕ. Çеçен-хирте витĕрех витекен вăйлă çил çĕкленчĕ. Анчах фронт çулĕсем тăрăх татти-сыпписĕр войскăсем куçаççĕ. Чăн та, машинăна кĕрт урлă каçарас тесе, вуншар хут та чарăнма лекрĕ. Боецсем васкаççĕ: умра Сталинград çути ялкăшать. Боецсем хăйсем ывăннине манса кайса, пĕр-пĕрне кĕрт ăшĕнчен тухма пулăшаççĕ, вĕсем оруди сассисемпе, бомбăсем çурăлнипе—çапăçу музыкипе кĕрлесе тăракан хулана хăвăртрах çитме васкаççĕ. Пирĕншĕн ку—çĕнтерӳ музыки, нимĕçсемшĕн вара—пытару музыки. Хула патне мĕн чухлĕ ытларах çывхарса пыратпăр, çав музыка çавăн чухлĕ вăйлăнрах кĕрлет.

Сталинградран инçетри тылалла нимĕçсен тыткăна парăннă, ырхан та тăм илнĕ салтакĕсен ушкăнĕсем утаççĕ, Кусем—нимĕçсен Сталинград патĕнче çавăрса илнĕ дивизийĕсен юлашкийĕсем. Юлашкисем çав! Кашни ушкăнра—пысăк-и вăл е пĕчĕккĕ—эсир тĕрлĕ чаçсенчи—пехотнăй, танковăй, артиллерийски чаçсенчи салтаксемпе офицерсене тĕл пулма пултаратăр. Анчах юлашки вăхăтра нимĕçсем подразделенийĕ-подразделенийĕпех тыткăна парăнаççĕ.

Пирĕн пĕр дивизи командирĕн блиндажĕнче çавăрăнкалама та май çук. Кунта нимĕçсен пур рангри офицерĕсене те—лейтенантран пуçласа генерала çити—тĕл пулма пулать. Акă тĕрлĕ çынсенчен тăракан делегаци пырса çитет: адъюдант нимĕçсен 297-мĕш пехотнăй дивизийĕнчен парламентерсем килни çинчен пĕлтерет. Парламентерсем вырăссен полковникне çакна калама ыйтаççĕ: вĕсен генералĕ хăйĕн штабĕпе пĕрле совет командованийĕн ультиматумне пĕтĕмĕшпех йышăнма килĕшет.

— Юлашкинчен çапах та ăнланчĕç,—тет полковник.—Парламентерсене кунта кĕме чĕнĕр.

Блиндажа çӳллĕ те ырхан лейтенант кĕрет. Вăл çапла пĕлтерет: 297-мĕш дивизин командирĕ генерал-майор Мориц фон Дреббер сире çакна каласа пама ыйтать: вăл хĕçпăшала çĕнтерӳçĕ умĕнче пăрахать тата хăйĕн дивизийĕн тыткăна парăнма ăçта пухăнмаллине кăтартса пама ыйтать.

Тыткăна парăнмалли условисене тĕпĕ-йĕрĕпе сӳтсе-явнă хыççăн, парламентерсем пирĕн дивизин представителĕсемпе пĕрле хулана, пĕр шкул çуртне, каяççĕ. Кунта тĕлпулу пулса иртмелле.

Полковник сехет çине пăхса илчĕ: çурçĕр иртни чылай пулать. Вăл хăйĕн полкĕсене калаçусем пынă вăхăтра пеме чарăнма приказ панă та халĕ нимĕçсен генералĕ хăйĕн штабĕпе пĕрле кĕç-кĕçех килсе кĕрессине кĕтсе тăрать. Полковник çав дивизие лайăх пĕлнĕ, ун офицерĕсен хушамачĕсене, вĕсен çапăçури пахалăхĕсене пĕлнĕ. Иртнĕ çулла çапăçу хирĕнче вăл 297-мĕш дивизипе Чугуев патĕнче тĕл пулнă, кĕркунне вара татах Цыбенкопа Алексеевка хуторĕсен районĕнче тĕл пулнă.

Полковникăн командăй пунктне Мориц фон Дреббер генерал хăйĕн штабĕпе пĕрле пырса кĕнĕ чухне çурçĕр иртни 2 сехете яхăн пулнă.

Генералтан çапла ыйтрĕç:

— Ăçта вара сирĕн полксем, салтаксем?

Фон Дреббер кулса илчĕ:

— Кун çинчен манăн сире каласа пама кирлĕ-и вара?! Ăçта манăн полксем? Чĕрĕ юлнисем пурте ĕнтĕ, господин полковник, сирĕн алăра. Эпĕ хамăн мĕнпур салтаксем хĕçпăшала пăрахччăр тесе приказ патăм, анчах вĕсем çакна эп приказ паричченех чылай маларах турĕç.

Генералпа пĕрле дивизи штабĕн начальникĕ, полксемпе батальонсен командирĕсем килнĕ.

Пĕтĕмĕшпе илсен, нимĕç генералĕ çĕнĕ обстановкăна часах хăнăхса çитнĕ-мĕн. Вăл калаçать тата хăйне хавасллă та тыткалать.

— Эсир миçе çулта?—тесе ыйтрĕ вăл полковникран.

— Вăтăрпиллĕк çулта.

— Çавăн пек çамрăкскер, эсир нимĕçсен шуралнă генералне парăнтарса тыткăна илме пултаратăр иккен. Эпĕ — Сталинград патĕнче тыткăна парăннă пĕрремĕш генерал пултăм.

— Çапла, вырăссене тыткăна парăннă нимĕçсен пĕрремĕш генералĕ,—терĕ полковник,—анчах эпĕ ку юлашки мар пулĕ тесе шанатăп.

— Çапла, юлашки мар,—терĕ генерал.—Пĕр сăмахпа, сире çакна каламалла: Сталинградункине лекнĕренпе вара генералсем нумайăшĕсем малалла хирĕç тăни усăсăр тата сиенлĕ тесе шутланă. Анчах „фюрер" пирĕн шухăша шута илмерĕ.

Калаçăва сасартăк телефон шăнкăртаттарни татать. Кӳршĕри чаçран румынсен дивизийĕ хăйĕн генералĕпе пĕрлех хĕçпăшала пăрахни çинчен пĕлтерчĕç.

— Акă, куратăр, господин генерал,—терĕ полковник,—эсир юлашки мар!

Тул çутăлас умĕн нимĕç офицерĕсен ушкăнне фон Дреббер генералпа пĕрле, автомашинăсем çине лартса, арми командующийĕ патне ăсатрĕç.

Çул оккупантсенчен ирĕке кăларнă ялсемпе хуторсем урлă выртать. Пур çĕрте те шăнса вилнĕ фрицсем, кышласа пĕтернĕ лашасем йăваланаççĕ. Çул айккисенче—тăшман пăрахса хăварнă пиншер машинăсемпе орудисем. Нимĕç генералĕ хăй паллакан ялсем çине нумайччен тинкерсе пăхать. Çав ялсем çинче халĕ совет ялавĕ мăнаçлăн варкăшать. Нимĕç лейтенанчĕ Адамгейм салхуллăн:

— Акă вăл Германи çарĕн намăс çулĕ,—терĕ.

Шуралнă генерал пуçне сулчĕ.

А. ДУНАЕВСКИЙ.
(„Правда", февралĕн 1-мĕшĕ).

Ăмăртса ĕçлекен колхозсем пĕр-пĕрин ĕçне пăхса тухрĕç

ВĂРНАР. Çак кунсенче ăмăртса ĕçлекен Кĕçĕн Кипекри «Память Ленина» тата Çĕн Алтăшри «Волга» колхозсем пĕр-пĕрин ĕçĕсене тĕрĕслесе тухрĕç, хăйсем çине çĕнĕ обязательствăсем илчĕç.

Фронт ыйтнине ăнланса ĕçленине пула, «Волга» колхоз иртнĕ çулта хăйпе ăмăртакан колхозран чылай пысăк хăвăртлăхсемпе малалла кайни палăрчĕ. Колхоз пысăк тупăшлă тырпул туса илнĕ, выльăх-чĕрлĕх тупăшне ӳстернĕ. Çавăн пекех колхозниксен ĕçри организованноçĕ те ӳснĕ.

Асăннă колхозсем хăйсен иртнĕ çулхи çитĕнĕвĕсемпе çитменлĕхĕсене тĕплĕн шута илсе критикăларĕç. «Память Ленина» колхозри уйхир бригадисем çитес çуракине хатĕрленес тĕлĕшпе чăтма çук йăраланаççĕ. А. Петрова ертсе пыракан 1-мĕш бригада ака хатĕрĕсем çинчен пуçĕпех манса кайнă. Кунта ялхуçалăх инвентарĕсем паянхи кун та юр айĕнче лараççĕ. В. Макаров бригадир пулса ĕçлекен 4-мĕш бригадăн сеялки те юр айĕнчех ларать, унăн резина трубисем сивĕпе йăлтах таткаланса, хуçăлса пĕтнĕ. Çакăн пекех плугсемпе сӳресем те тимĕрçĕ лаççи умĕнче юсама тытăнассине кĕтсе выртаççĕ. Колхоз вăрлăх хатĕрлес ĕçе халĕ те вĕçлемен-ха.

Государствăн оборонăллă заданийĕсене мĕнле пурнăçласа пынине пăхса тухса, комисси Кĕçĕн Кипексем япăх ĕçленĕ тесе хакларĕ.

— «Волга» колхоз фронт заданийĕсене пурне те срокчен пурнăçласа пынă. Фронтпа çĕршыва тырă, аш-какай, укçа-тенкĕ парса пулăшассипе вăл районра малта пынă. «Память Ленина» колхозăн паянхи куна та государство умĕнче парăмсем пур-ха. Эпир кăна тӳсме пултараймастпăр, — тет «Волга» колхозри стахановец И. Семенов юлташ, хăйсемпе ăмăртса ĕçлекен колхозăн ĕçне критикăласа.

ВКП(б) Чăваш Обкомĕн XIII-мĕш пленумĕ «1942 çулхи ялхуçалăх çулĕн итогĕсем тата 1943 çулхи çуракине хатĕрленес тĕлĕшри задачăсем çинчен» йышăннă резолюцие пурнăçлас енĕпе «Волга» колхозра чылай ĕçсем тунă ĕнтĕ. Кунта ялхуçалăх инвентарĕсене ремонтлама пуçăннă, вăрлăхсене хывса çитернĕ тата тивĕçлĕ кондицие лартнă, туртăм вăйне те лайăх апат çине тăратнă, уйхир ĕçĕн бригадирĕсем ĕç вăйне звеносем тăрăх уйăрса çирĕплетнĕ.

Социализмлă ăмăртура мала тухасси колхозниксем хушшинче агитациллĕ-массăллă ĕçе туса пынинчен нумай килет. «Волга» колхозра стена хаçачĕсемпе боевой листоксем тăтăшах тухса тăраççĕ. Хисеп хăмине йĕркеленĕ. Агитаторсем колхозниксене Хĕрлĕ Çарăн çитĕнĕвĕсем çинчен тăтăшах пĕлтерсе тăраççĕ.

— Çитес çул вăйлă тырпул туса илсе, районра мала тухма пирĕн пур условисем те пур. Эпир «Волга» колхозран кая юлмастпăрах—, тет «Память Ленина» колхозăн председателĕ, отечественнăй аслă вăрçăн участникĕ С. Сниткин юлташ.

С. Селезнев.

Илнĕ обязательствăсене пурнăçа кĕртсе пыраççĕ

КАНАШ, февралĕн 1-мĕшĕ. (Телефонпа). Хĕрлĕ Çар 25 çул тултарнă ятпа пыракан социализмлă ăмăртăва хутшăнса, «Авангард» промартель коллективĕ январьпе февраль уйăхĕсенчи производство планĕсене Хĕрлĕ Çар кунĕ тĕлне тултарма, ĕç тухăçлăхне 19 процент ӳстерме, февраль уйăхĕнче консерва савăчĕсем 7.000 литр туса кăларма, ача-пăча одеялĕсем çĕлеме тытăнма тата ирхи пахча-çимĕçсем лартма хатĕрленме пулнă.

Халĕ артельре çав обязательствăсене пурнăçа кĕртессишĕн ăмăрту сарăлса пырать. Çĕвĕ çĕлекен цех (заведующийĕ Михайлов) кулленхи ĕçсен графикне 180 процент тултарать. Çăматă йăвалакан цех та (заведующийĕ Байкалов) хăйĕн заданине кунсерен иртттерсе тултарать. Чылай цехсем январь уйăхĕнчи ĕç планне срокчен вĕçленĕ. Сăмахран, тир тăвакан цех уйăхри плана 20 кун хушшинче, щеткăсем тăвакан цех — 23 кун хушшинче тултарнă. Тăмран чашăк-чӳлмексем тăвакан цех та уйăхри задание 2 хут ытла, вĕрен явакан цехри Кустерин бригади 2 хута яхăн ирттерсе тултарнă.

Артель халĕ ача-пăчасем валли одеялăсемпе алсасем çĕлет. Январĕн 26-мĕшĕ тĕлне çав япаласен малтанхи партине туса кăларнă.

Хĕрлĕ Çарăн фронтри çĕнтерĕвĕсем çине ответлесе, артель членĕсем ĕç тухăçлăхне ӳстерсех, пахалăхне лайăхлатсах пыраççĕ. Хĕрлĕ Çарпа халăх валли кунран кун ытларах продукци туса кăлараççĕ.

Г. Михайлов.

Укçа-тенкĕпе япаласен иккĕмĕш лотерейин 426 билечĕ çине вылявсем тухнă

Укçа-тенкĕпе япаласен иккĕмĕш лотерейин районри ĕççыннисем туяннă 426 билечĕ çине вылявсем тухнă. Вăл шутран пĕр выигрыш—10.000 тенкĕлĕх, 4 выигрыш—1.000-шер тенкĕлĕх, 24 выигрыш 500-шер тенкĕлĕх тата ытти те. Кунсăр пуçне пĕр билет çине — 2.800 тенкĕ тăракан кĕмĕл сехет, 2 билет çине—костюм çĕлетмелли пустав тăрăхĕсем, 6 билет çине—хĕрарăмсен атă-пушмакĕсем, пĕр билет çине—каракуль çĕлĕк тухнă.

(ЭЛĔК, «Колхоз хаçачĕ»).

Ют çĕршывсенче

ÇУРÇĔР АФРИКĂРИ ВĂРÇĂ ĔÇĔСЕМ

ЛОНДОН, февралĕн 1-мĕшĕ. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе пĕлтернĕ тăрăх, çыран хĕрринчи участокра кĕрешекен Англи войскисем ĕнер Зуару хулине йышăнса илнĕ, противникпа çав хуларан хĕвеланăçнерехре çапăçнă.

Тунисра тăшманăн чаçĕсем, танксем пулăшса пынипе тата пысăк çухатусем тӳссе, француз войскисене кăшт каялла чакарнă.

Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, тĕнĕл держависен Тунисра кĕрешекен войскисен составне Германин 10-мĕш бронетанковăй дивизийĕ тата Италин «Суперга» ятлă пĕрремĕш дивизийĕ кĕрет. Итали дивизийĕ нимĕç войскисем пулăшнипе Пон-дю-Фаспа Усельтия хушшинчи çӳллĕ вырăн тăрăх пыракан линие хăй аллинче тытса тăрать.

Союзниксен авиацийĕ тăшманăн темиçе паха çар объектне тата тылри çыхăну линийĕсене темиçе хут та хаяррăн тапăннă. Вăйлă пушарсем тухнă тата взрывсем пулнă.

ЖИРОПА ДЕ ГОЛЛЬ ХУШШИНЧИ КАЛАÇУСЕМ ПИРКИ

ЛОНДОН, февралĕн 1-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Жиро генерал çапла каланă: хальхи вăхăтра французсен пĕрлĕхлĕ движенийĕ нимĕн чухлĕ те курăнмасть-ха, — тенĕ. Вăл хăй де Голль генералпа «вăрçă, экономика тата финанс ыйтăвĕсем тĕлĕшпе çыхăну тытасси çинчен» кăна килĕшӳ тунă.

Рейтер агентствин дипломатиллĕ ĕçĕсене пăхса тăраканĕ çапла пĕлтерет: де Голльăн Лондонри тĕп ставкинче Жиро генералăн специальнăй миссине тăваççĕ. Жиро генерал патĕнче те, Алжирта, Францин национальнăй комитечĕн çавăн пек миссийĕ пулать. Икĕ миссийĕ те вăрçă, экономика тата техника ыйтăвĕсем тĕлĕшпе ĕçлеççĕ, анчах вĕсене нимĕнле политикăллă функци те памаççĕ. Жиропа де Голль хушшинчи калаçусем пирки чарăнса тăрса, обозреватель çакна кăтартса парать: вĕсем политикăллă ыйтусене те сӳтсе-явнă, анчах икĕ енĕ йышăнса тăракан позицисем хушшинчи хирĕçӳсене хальхи вăхăтра сирсе яма май килмен. Де Голль республикăллă законсене пĕрлештернĕ тата Виши майлă тăракан элементсене сирсе янă никĕс çинче политикăллă тĕп власть тăвассишĕн çине тăрать. Жиро генерал де Голльăн çав сĕнĕвĕсене йышăнма хальхи вăхăтра май çук тесе шутлать.

АФИ агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Кĕрешекен Францин ушкăнĕсенче çапла шухăшлаççĕ: хальхи условисенче де Голльпа Жиро хушшинчи калаçусен объекчĕ пулнă мĕнпур проблемăсене çийĕнчех тата татăклăнах татса парассине кĕтме май çук, теççĕ.

ЮГОСЛАВИ ПАТРИОЧĔСЕМ ОККУПАНТСЕНЕ ХИРĔÇ КĔРЕШЕÇÇĔ

ЖЕНЕВА, февралĕн 1-мĕшĕ. (ТАСС). Итальянецсемпе нимĕçсен тата усташасен пысăк чаçĕсене, ирĕке кăларнă территори çине наступлени пуçласа янăскерсене, хирĕç Югослави патриочĕсем малалла та вăйлăн тăрса кĕрешеççĕ. Грачац районĕнче противникăн пĕрлештернĕ отрядне çапса аркатнă. Нумай трофейăсем тытса илнĕ, вăл шутра юсавлă 2 танк пур. Оккупантсем Санский Мост, Карловац Слунь, Глина-Констанйица районĕнче малалла куçма хăтланнине Югослави патриочĕсем ăнăçлăн сирсе пăрахнă. Тăшманăн авиацийĕ январĕн 23-мĕшĕнче Жировац, Петровац тата халăх пурăнакан ытти пунктсем çине бомбăсем пăрахнă. Граждăнла халăхсем хушшинче жертвăсем пур.

ГРЕЦИ ПРАВИТЕЛЬСТВИН ЗАЯВЛЕНИЙĔ

ЛОНДОН, февралĕн 1-мĕшĕ. (ТАСС). Грецин телеграф агентстви çакăн пек пĕлтерӳ пичетлесе кăларнă: «Греци правительстви çапла пĕлтерет: вăл халăх суверенитечĕн принципĕсемпе çыхăннă, çавăнпа вăл, Греци ирĕке кăларнă хыççăн Афинăна таврăнсан, хăйĕн полномочийĕсене пăрахма тивĕçлĕ тесе шутлать, çапла туса халăха мĕнпур специальнăй тата политикăллă юхăмсен тата оккупаци вăхăтĕнче Грецие ирĕке кăларма активлăн пулăшнă партисене е организацисене пĕрлешнĕ нациллĕ мĕнпур вăйсен представителĕ тăма пултаракан правительство суйлама ирĕк парасшăн.

РУЗВЕЛЬТ ВАШИНГТОНА ТАВĂРАННИ

ВАШИНГТОН, февралĕн 1-мĕшĕ. (ТАСС). Рузвельт Çурçĕр Африкăран Вашингтона таврăннă.

ГЕРМАНИ ФЛОЧĔН КОМАНДУЮЩИНЕ РЕДЕР АДМИРАЛА ВЫРĂНТАН КĂЛАРНĂ

ЖЕНЕВА, январĕн 31-мĕшĕ. (ТАСС). Берлинра официальнăй йĕркепе çапла пĕлтернĕ: январĕн 30-мĕшĕнче, Гитлер хушнă тăрăх, Германин тинĕс-çар флочĕн главнокомандующине Редер адмирала «сывлăх начар пирки» вырăнтан кăларнă. Тинĕс-çар флочĕн главнокомандующийĕ пулма Дениц адмирала лартнă, Дениц вăл халиччен подводнăй флотăн командующийĕ пулса ĕçленĕ.

ИТАЛИН ГЕНЕРАЛЬНĂЙ ШТАБĔН НАЧАЛЬНИКНЕ ВЫРĂНТАН КĂЛАРНĂ

ЖЕНЕВА, январĕн 31-мĕшĕ. (ТАСС). Римран пĕлтернĕ тăрăх, унта генеральнăй штабăн начальникне Кавалеро генерала вырăнтан кăларни çинчен официальнăй йĕркепе пĕлтернĕ. Приказра Кавалерона «хăй ыйтнă тăрăх» вырăнтан кăларнă тенĕ. Генеральнăй штабăн начальникĕ пулма Виттерио Амброзио генерала лартнă, вăл халиччен арми штабĕн начальникĕ пулса ĕçленĕ.

--o--

Вулав çурчĕсемпе клубсен ĕçне хакламанни пулмалла мар

КАЛИНИНО. Хăмăшри Папанин ячĕпе тăракан колхозри вулав çурчĕ лайăх ĕçлет. Унта урайсем таса, стенасем çине йĕри-таврах портретсем, лозунгсемпе плакатсем çыпăçтарса тухнă. Вулав çурчĕн заведующийĕ О. Ананьева юлташ хăйĕн ĕçне юратса туса пырать.

Вулав çурчĕ тăтăшах колхоз активĕн, агитаторсен тата калаçу ирттерекенсен канашлăвĕсене ирттерет.

Анчах хăшпĕр çĕрте вулав çурчĕсен ĕçне хакламаççĕ. Кивçурт Мăратри „Хĕрлĕ Çăлтăр" колхозăн клубне пахча-çимĕçсемпе çĕрулми хумалли склад туса хунă. Ялсовет исполкомĕнче ĕçлекенсем вулав çурчĕпе клубсен хуçалăхне юсасси çинчен сăмах та хускатмаççĕ.

Çавăн пекех Тури Карачурари клуба та тырă хывнă. Вулав çурчĕ те йĕркеллĕ ĕçлемест. Унта вăрçă ĕçне вĕренмелли кĕнекесем сахал. Ялсовет исполкомĕн бюджечĕ тăрăх, вулав çурчĕ валли çĕнĕ кĕнекесем илме укçа-тенкĕ уйăрнă. Анчах вулав çурчĕн заведующийĕ А. Егорова вăл укçа-тенкĕпе çĕнĕ кĕнекесем туянма тăрăшмасть-ха.

Б. Шорников.

ТЕНЧЕРИ ĔÇСЕНЕ ПĂХСА ТУХНИ

Пĕтĕм тĕнче, малтанхи пекех, Совет Союзĕпе Германи хушшинчи фронтра — гитлерла тиранние хирĕç пыракан вăрçăн тĕп фронтĕнче пулса иртекен событисемпе интересленет.

Хĕрлĕ Çарăн çĕнтерӳллĕ наступленийĕ икĕ уйăх ытла пырать. Çав вăхăт хушшинче нимĕçсен çарĕ тата Гитлер вассалĕсен çарĕсем çынсемпе техника тĕлĕшĕнчен çав тери пысăк çухатусем тӳсрĕç.

Çав çухатусене Совет Союзĕпе Германи хушшинчи фронта инçетри тылран, оккупациленĕ çĕршывсенчен, уйрăмăн илсен, Францирен, резерври дивизисене куçарса килнипе витес тесе, гитлерла командовани хăйĕн мĕнпур вăйне хурса тăрăшать. Германире хăйĕнче фашистла влаçсем мĕнпур резервсене мобилизацилеççĕ. Ютçĕршыв пичетĕнче тухнă хыпарсем тăрăх, çарта пулăшмалли ĕçсем туса пыма тесе, 16 çулхи ачасене те гитлерла правительство çара илнĕ. Ятарласа тунă комиссисем, çĕнĕ салтаксем шыраса, гитлерла йăваран мĕнпур пеккине шăпăрпа шăлса пуçтараççĕ. Берлинра импери оборонин задачисене пурнăça кĕртме тесе, арçынсемпе хĕрарăмсене тата ачасене талккишĕпех мобилизацилесси çинчен приказ кăларнă. Çав приказ тăрăх ĕçре тăман мĕнпур нимĕçсене, вăл шутра ачасемпе 65 çула çитнĕ стариксене те, влаçсем кăтартса панипе ĕçе яраççĕ.

Фашистла шайккă çĕнĕ авантюрăсем тума хăтланĕ. Умра хаяр çапăçусем тăраççĕ-ха. Анчах халĕ ĕнтĕ вăрçă ĕçĕсенче пысăк улшăнусем пулса иртни уççăнах курăнса тăрать. Хĕрлĕ Çар пуçарулăха тăшман аллинчен тытса илчĕ.

Хĕрлĕ Çар ăнăçлă наступлени туса пыни тата нимĕçсен фашистла войскисемпе вĕсен вассалĕсем Совет Союзĕпе Германи хушшинчи фронтра пысăк поражени тӳсни тĕнчери лару-тăрăва та питех те пысăк улшăнусем кӳреççĕ. Гитлерла Германия ĕнтĕ хăйĕн союзникĕсемпе вассалĕсен лагерĕнче халиччинхи чапне çухатрĕ. Италин, Венгрин, Румынин, Финляндин влаçра тăракан ушкăнĕсем халĕ ĕнтĕ хăйсен малашлăхĕ пирки ытларах шухăшлаççĕ. Вĕсем нимĕçсен çарĕн хăватне шанса тăни хавшарĕ. Вĕсем çакна лайăх ăнланма тытăнаççĕ: гитлерла Германин вăрçă тĕлĕшĕнчи тата тĕнчери позицийĕсене малалла вăйсăрлатса пыракан событисем пулса иртнĕ май вĕсемшĕн те тавăру сехечĕ пĕр пăркаланмасăр çывхарса килет. Çакă вăл фашистсен лагерьне ытларах та ытларах аркану кӳмесĕр хăварма пултараймасть. Хĕрлĕ Çар нимĕçсен фашистла войскисене пыра-пыра çапни гитлерла блока, фашистла Германия ăнăçусем тунă тапхăрта пулса тăнă блока, арканса каясси патне илсе çитерет. Çав мĕнпур вĕт-шакăр тискер кайăксене ун чухне тĕп вăрă-хурахăн — нимĕç плутократийĕн сĕтелĕ çинчен мĕнле те пулин татăк тивес пек туйăннă.

Фашистла лагерь арканса пынипе пĕрлех Гитлера хирĕçле лагерь кунран кун ӳссе çирĕпленсе пырать. Хĕрлĕ Çар тунă çĕнтерӳсем ирĕклĕхе юратакан мĕнпур халăхсене пĕр-пĕтĕм тăшмана хирĕç пыракан татăклă кĕрешĕве вăйлатма хавхалантараççĕ.

* * *

Нимĕçсен фашистла войскисем Совет Союзĕпе Германи хушшинчи фронтра поражени тӳснине гитлерла шайккă юлашки кунччченех пытарса пурăннă. Анчах та гитлерла пуçлăхсен Хĕрлĕ Çар ăнăçлă наступлени туса пынине текех пытарса тăма май килмен.

Акă мĕнле илтĕнет фашистла хаçатсен хĕллехи сасси: «Каллех, пĕлтĕрхи пек, хĕвелтухăçĕнчен сивĕ çил вĕрет, çав çил тăшман пирĕн фронта хирĕç яракан массăсемпе пĕрле куçать. Пирĕн салтаксем текех савăнăçлă ĕмĕтпе хавхаланмаççĕ, вĕсем нимĕнле чудо та кĕтмеççĕ» («Франкфуртер цейтунг») е тата: «Францири кампани хыççăн пирĕнтен нумайĕшĕн пулнă илĕртӳллĕ те ытарлă ĕмĕтсене эпир пăрахрăмăр, тата, чи малтан, эпир çакна туйса илтĕмĕр: Совет Союзĕ вăл — пĕрре-иккĕ çапнипех ӳкерме çук улăп пулса тăрать» («Нейер Таг»). Çавăн пекех «Кракауэр цейтунг» хаçат та салхуллăн йышăнса çапла çырать: «Хĕвелтухăçĕнчи вăрçă эпир пурте кĕтнинчен нумай вăраха кайрĕ, вăл эпир ĕмĕтленнинчен кунран кун ытларах хĕрӳленсе, хаярланса пырать».

Виççĕмĕш империре пурăнакансен, темĕнле хăйсемшĕн хăрушă япала пулса иртнине ăнланса илес тесен, фашистла пичетĕн сасси сасартăках улшăнни çине çавăрăнса пăхмалла кăна пулнă. Нимĕçсен çавнашкал шухăшне Германири фашистла пуçлăхсен çĕнĕ çулхи приказĕсем те хускатса яма пултарнă. Гитлерăн приказĕнче: кăçалхи хĕл иртнĕ çулхинчен йывăрах пулмĕ тесе каланă пулсан, Герингăн вара сывлăш-çар флотне панă приказра тӳрех çапла калама лекнĕ: «Пире малашлăх мĕн кӳрессине эпир хальхи вăхăтра пĕлместпĕр-ха», тенĕ вăл.

Хĕрлĕ Çар нимĕçсене çĕнĕрен аркатмаллах пыра-пыра çапни Германие тытса пыракан ушкăна шиклентерсе ӳкернĕ. Гитлерла хаçатсем хăрушлăх çинчен çуйăхса çыраççĕ. Гитлерла çар Совет Союзĕпе Германи хушшинчи фронтра поражени тӳснине нимĕçсен фашистла пичечĕ текех пытарса тăма пултараймасть. «Фелькишер беобахтер» хаçат çапла çырать: «Германи фрончĕ Хĕвелтухăçĕнче хальхи вăхăтра нихăçан, нимĕнле çар та тӳсмен чи йывăр испытанисене тӳсет». «Берлинер берзенцейтунг» хаçат Германи командованийĕн стратегиллĕ планĕсем путланса ларнине йышăнать. «Кăçалхи çул, — тесе çырать хаçат,—Кăнтăр фрончĕ — нимĕç войскисем Сталинград районĕнче тата Кавказра хура кĕркуннечченех хаяр çапăçусем туса пынă тата апла пулин те стратегиллĕ ăнăçу тума пултарайман фронт, Германи çарĕшĕн питех те йывăр та хăрушла пункт пулса тăчĕ».

Январĕн 30-мĕшĕнче гитлерла шайккă Германире влаçа хăй аллине илнĕренпе 10 çул тултарнине палăртрĕ. Гитлер малтанхи хут çав кун шарламасăр ларма шутланă пулас. Ун вырăнне Геринг сăмах тухса каланă, Геббельс вара Гитлерăн нимĕçсем патне чĕнсе çырнă тытăнкăсăр çырăвне вуласа панă. Гитлерла пуçлăхсен сăмахĕсем нимĕçсене лару-тăру питех те йывăррине ăнланса илме чĕнсе, каçăхса кайсах çуйăхнипе тулса ларнă тата вĕсем Гитлер «тотальнăй мобилизаци» тăвасси çинчен пĕлтернине пурнăçа кĕртессинчен пăрăнакансене пурне те хаяррăн тыткаласситпе хăратнă.

Гитлерла пропаганда Германири халăха юнать. Германири хаçатсемпе радио «импери кунçулĕ çип çинче çакăнса тăни çинчен» çуйăхаççĕ. Халĕ ĕнтĕ гитлерла шайккăн, Европăри çĕршывсене виçĕ çул ытла юнпа шӳтерекен вăрă-хурахла ушкăнăн кунçулĕ пирки ĕç татăлать. Нимĕçсене хăратса, гитлерла ушкăн, тавăру сехетне аяккарах сирес шутпа, Германи çĕршывĕнчен юлашки резервсене сăрхăнтарса илме хăтланать.

* * *

Çурçĕр Африкăра Англи войскисем, январĕн 23-мĕшĕнче Триполине йышăнса илсе, Ливи территорине нимĕçсемпе итальянецсен войскисенчен пĕтĕмĕшпех тасатрĕç. Роммель çарĕн юлашкийĕсем Тунисалла чакаççĕ. Кĕрешекен Францин войскисем Çурçĕр Африкăри операцисенче чылай пысăк вырăн йышăнчĕç. Вĕсем Лекрерк генерал ертсе пынипе Чад кӳллинчен пуçласа Триполи патне çитиччен пысăк поход турĕç, Кăнтăр Ливие тăшман гарнизонĕсенчен тасатрĕç.

Çав кунсенчех Касабланкăра (Çурçĕр Африка) Великобритани премьер-министрĕ Черчилль США президенчĕпе Рузвельтпа тĕл пулчĕ. Вунă кун хушши канашлусем пулса пычĕç. Çав канашлусене икĕ çĕршывăн та хĕçпăшаллă вăйĕсен штаб руководителĕсем хутшăннă. Çав канашлусенче 1943 çулхи вăрçă операцийĕсем тĕлĕшпе пĕтĕмĕшпех килĕшӳ тунă. Пресс-конференцире Рузвельт çапла каланă: союзниксем «пĕтĕм тĕнчипе хăватлă наступлени тума хатĕрленеççĕ», тенĕ.

И. ЕРМАШЕВ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн — 4—26, промышленность пайĕн —3—99, ялхуçалăх пайĕн — 5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 930

Типография №, Управления полиграф промышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 2 Ф. 6. 56. 84 п.